28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
АВГУСТ
1
ЮНКУН
147(6898)№

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе
Шупашкар хула комитечĕн,
ЧАССР Верховный Советĕн
тата Шупашкар хула
Советĕн хаçачĕ

Совет çыннин моралĕ сăн-сăпачĕ

Йăлтах тăван халăхшăн, йăлтах Тăван çĕршывшăн тенĕ лозунг совет çыннин тĕп шухăш-камăлĕ пулса тăчĕ. Пирĕншĕн Тăван çĕршывăн интересĕсенчен пахарахи урăх нимĕн те çук. Уйрăм çынăн пурнăçĕ обществăллă пурнăçа пăхăнса тăрать, социализмлă обществăра уйрăм çынăн творчествăри уйрăмлăхĕ çакăн пек чухне çеç вăйăн аталанма пултарать.

Отечественнăй вăрçă çулĕсенче совет патриочĕн таса паханăхĕсем анăран уçăлса аталанса кайрĕç. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пынă кĕрешӳ пирĕн çĕнтерӳпе вĕçленес ĕçре Совет çыннисем мораль енчен маларах тăни татăклă выран йышăнса тăчĕ. Пирĕн халăхăн чăтăмлăхĕпе героизмĕ, вăл мĕнпур вăя хурса ĕçлеме тата хăйне хăй шеллемесĕр кĕрешме хатĕрри ют çĕршывсенчи çынсене тĕлĕнтерет, вĕсене пулма пултарайман ĕç пек туйăнтарать. Отечественнăй аслă вăрçă улăпăсен моралĕ шухăш-камăлĕ малта пыракан этемлĕхе ĕмĕр-ĕмĕр хавхалантарса пырĕ.

Сталин юлташ героизм вăл социализмлă обществăри çынсен уйăрăлми сăн-сăпачĕ пулса тăрать тесе палăртнă. «Отечественнăй вăрçă,—терĕ вăл,—совет халăхĕ тĕлĕнмелле япаласем тума пултарнине тата чи йывăр тĕрĕслеврен те вăл çĕнтерекенĕ пулса тухма пултарнине кăтартса пачĕ».

Эпир çĕнтернĕмĕр, мĕншĕн тесен миллионшар патриотсем—арçынсем, хĕрарăмсем, ача-пăчасем—хамăрăн Тăван çĕршывăн чыслăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн пынă аслă кĕрешӳ вăхăтĕнче çĕнтерӳ тăвас тесе нимĕн те хĕрхенсе тăмарĕç. Хамăрăн Тăван çĕршыв çĕнтертĕр тесе, кашни совет çынни çав тери тăрăшрĕ, çав çĕнтерӳ пулмасан, уйрăм çынăн телейĕ пулас çуккине пĕлсе тăчĕ.

Çĕнтерӳçĕр пурнăç та, хаваслăх та çук. Ирĕклĕх те, тăван çурт та çук...

Çапла шутларĕç совет çыннисем. Вĕсен тӳрĕ кăмăлпа тунă ырă ĕçĕсене пирĕн халăхăн ялавĕ пулса тăракан илемлĕ те таса идейăсем ертсе пычĕç. Çак идейăсем —большевиксен партийĕн, Ленинпа Сталинăн идейисем. Большевиксен партийĕ çĕнĕ ăру воспитани парса çитĕнтерчĕ. Çав ăру Совет власĕ çулĕсенче çĕнĕ мораль, эксплоататорла обществăн моралĕпе нимĕн чухлĕ те çыхăнса тăман мораль илсе çитĕнчĕ. Совет халăхĕ большевиксен партийĕ ертсе пынипе, унăн çĕршыва улăштарнăлла çав тери пысăк патриотизма аслă программипе хавхаланнăскер, социализма йăлан çĕнĕ принципĕсене йышăнса илчĕ.

Пирĕн моралĕн чи аслă принципĕ совет стройне çирĕплетессишĕн кĕрешесси пулса тăрать. Совет çыннишĕн чи паха ĕç, чи таса ĕç тăван халăхшăн тăрăшасси пулать. Çакăнпа пĕрлех социализм строительстви вăл—мĕнпур этемлĕхшĕн, прогресшăн, культура интересĕсемшĕн тăрăшни пулать. Совет çыннин моралĕпе йăлан çинчен Ленин комсомолăн 3-мĕш съездĕнче каланă хăйĕн паллă сăмахĕнче çапла каçтартса панă: «Йăла вăл этем обществине татах та çулерех çĕкленме тытăнса тăрать...»

Этемĕн çак чăн-чăн моральне пула совет çыннин вăй-хăвачĕ вунă хут ытла ӳсрĕ. Вырăс халăхĕн çутçанталăкран килекен пахалăхĕсем çĕнĕ тĕс илсе йăлтăртатма тытăнчĕç. Вырăс çыннин уçă ăсĕ, халĕ хамăрăн анлă Тăван çĕршывăн çутçанталăк пуянлăхĕсене тĕнчесе вĕренсе алла илес ĕçе янăскер, çав тери хăйăх заводсем, электростанцисем, лабораторисем тума, тăшмана аркатса тăкма пулăшрĕ, халĕ хамăрăн пурнăçа тата пуянрах та телейлĕрех тума пулăшать. Вырăс халăхĕн тата Совет Союзĕнчи мĕнпур ытти халăхсен ĕçченлĕхĕ, пуриншĕн те ырлăх тăвас ĕçе янăскер, историри кĕске вăхăтрах социализмлă государствăн экономикăпа вăрçă ĕçĕнчи никам çĕнтерейми вăй-хăватне туса хума пулăшрĕ.

Совет çыннин моралĕ ытти нацири çын çине туслăн пăхма вĕрентсе пычĕ. Совет Союзĕнчи халăхсем пĕр-пĕринпе тăванла пурăнни Совет çĕршывĕн никам çĕнтерейми вăй-хăвачĕн çăлкуçĕ пулса тăрать. Написен чăн-чăн пĕртанлăхне ССР Союзĕн —чи малта пыракан демократиллĕ çĕршывăн—Сталинла Конституцийĕнче ытлăн саспаллисемпе сырса çирĕплетнĕ.

Совет çыннисем хăйсен чи лайăх вăйĕпе шухăшне Тăван çĕршыва парса, обществăлă интерессене уйрăм çынăн интересĕсенчен çулерех хурса, кашни уйрăм çынăн çав тери тăрăшнине кăтартса параççĕ. Тăван çĕршывăн йывăр кунĕсенче хăйĕн укçи-тенкине çĕршывăн хĕспăшаллă вăйне тума панă Ферапонт Головатый колхозникăн тата пирĕн çĕршыври малта пыракан ытти çынсен патриотла ĕçĕ Хĕрлĕ Çара хамăрăн Тăван çĕршывран фашистла захватчиксене хăваласа кăларма пулăшрĕ. Миллионшар ӳсăлăха нимĕçсем аркатса пĕтерсе тăкассинчен çăлса хăварчĕç.

Мирлĕ аталану тапхăрĕнче ĕççыннисем мĕнпур халăхăн интересĕсене тĕрĕс ăнланни—совет государствин вăй-хăватне малалла çирĕплетес тата совет çыннисен пурнăçне лайăхлатас ятпа тӳрĕ кăмăлпа таса ĕçсем тума хушать. Совет çыннисен аслă моралĕ, социализмлă ăстăнлăхĕ нумаях пулмасть Магнитогорскпа Кузнецк рабочийĕсем, Мускаври автомобиль тăваткан рабочисем, авиаци, танк, апат-çимĕç, станоксем тăвакан работниксем тата промышленноçăн ытти отраслисенчи работниксем чĕнсе каланинчен те лайăх куранса тăрать. «Тăрăшса ĕçленипе ССР Союзĕнчи халăхсен телейлĕ те пуян пурнăçне çĕнĕрен чĕртсе чечеклентерĕпĕр», тесе çырнă Сталин ячĕпе тăракан автозаводри работниксем машинăсем тăвакан мĕнпур работниксене чĕнсе каланинче. Колхозниксен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне пуçарнă Воронеж облаçĕнчи Добринка районĕнчи Ильич ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнчи колхозниксемпе колхозницăсене те çак идейăсемех хавхалантарса пынă.

Государствăн обществăллă интересĕсем мĕнпур ĕççыннисен интересĕсемпе таччăн çыхăнса пынине ăнланни совет çыннин ăстăнне çав тери таран кĕрсе вырнаçнă! Совет çыннисем пирĕн халăх хуçалăхĕн ӳсĕмĕсем, социализм строительствин çитĕнĕвĕсем ĕççыннисен материальнăй тата культура тĕлĕнчи пурнăçне лайăхлатнине курса тăраççĕ. Партин çĕршыври производство вăйĕсене çав тери хăватлăн аталантарас тĕлĕшпе туса пыракан мĕнпур ĕçĕ халăх ырлăхĕ çинчен тăрăшни çинче, совет çыннине пуян, культурăллă, телейлĕ пурнăç туса парассишĕн тăрăшни çинче никĕсленсе тăрать.

Обществăллă тата уйрăм çынсен интересĕсене пĕр-пĕринпе кирек епле майпа хирĕçтерни те, вĕсем пĕр-пĕринпе килĕшеймеççĕ тесе калани те социализм çинчен элек сарни пулать. Хăшпĕр работниксем эпир государствăн пысăк задачисене татса парас тĕлĕшпе ĕçлетпĕр тесе, ĕççыннисен нушисене тата прависене тивĕçтерес ĕçрен пăрăнни совет законлăхне, совет моральне пăсни пулса тăрать. Çынпăн тăрăшни, рабочисен, колхозниксен, интеллигенцин ыйтăвĕсене тĕрĕс татса пама тăрăшни, вĕсене ĕçре, тата йăлара лайăх условисем туса пама тăрăшни кашни совет работникĕн чи таса тивĕçĕ пулмалла.

Большевиксен партийĕпе Сталин юлташ кашни ĕççыннишĕн кунсерен тăрăшаççĕ. Советăн простой çынни çинчен Сталин юлташ Çĕнтерӳ Парачĕ ячĕпе пулнă Кремльри ĕнтĕлнурта каларĕ. Сталин юлташ совет çыннисене пирĕн аслă державăн чыслăхĕшĕн пысăк ответ тытма вĕрентет, Хĕрлĕ Çар боецĕсене кӳршĕри халăхсем тĕлĕшпе хăйсене хăйсем совет воннĕсене тивĕçлĕ пек тытма вĕрентет. 1945 çулхи майăн 1-мĕшĕ тĕлне кăларнă приказра Сталин юлташ çапла каларĕ:

«Тăван çĕршыв тулашĕнче чухне уйрăмах сыхăлăхла пулăр!

Совет воннĕн чыслăхĕпе тивĕçлĕхне малтанхи пекех çӳлте тытăр!»

Совет çыннин чыслăхĕ çынна тăтăшах ӳссе пайăхланса пыма, вĕренессишĕн тăрăшма, яланах малалла пыма хушать. Миллионшар ĕççыннисем хăйсен мĕнпур пурнăçĕнче халăхсен генийĕсен — Ленинпа Сталинăн аслă примерĕсене пăхăнса пыма тăрăшаççĕ. Ленинăн пурнăçĕпе ĕçĕ, Сталинăн пурнăçĕпе ĕçĕ—тăван халăхшăн усăллă пулма ĕмĕтленекен, хăйĕн мĕнпур вăйне тăван халăха пама тăрăшакан совет çыннисемшĕн çав примерсенчен аслăрахси тата пайăхрахси мĕн пулма пултарĕ!

Пур задачăна татса панă чухне те вырăссен революциллĕ çулăмлăхĕ тата большевикла ĕçченлĕхĕ пулни; ĕç кашни çыннăн мухтавлăхна хăюлăх ĕçĕ, халăх умĕнчи таса тивĕç пулса тăни; пурнăçпа йăлара мораль енчен таса пулни; тăшмана хирĕç кĕрешнĕ чухне хастарлă та хăюллă пулни—çакăн пек ĕнтĕ совет çыннин сăн-сăначĕ. Большевиксен партийĕ воспитани парас тĕлĕшри хăйĕн мĕнпур ĕçĕнче, ĕçре мухтанма юратман çынсене маларах хурса пынипе çак сăнсăната аталантарса пырать. Вăл наянлăхпа юлтавлăха, бюрократла суялăха, культурăсăрлăха, организацилăх çуккине хăйĕн мĕнпур авторитечĕпе питлет.

Совет державин гражданинĕ пулса пурăнасси питĕ пысăк чыс. Мĕнпур тĕнчере, мĕнпур халăхсем умĕнче совет çыннин сăн-сăпатне мораль тасалăхĕ, ырă кăмăллăх хупăрласа тăрать. Çак авторитета çапăçусенче, совет халăхĕ историллĕ малти вырăна тухнипе çĕнтерсе илнĕ. Совет халăхĕ гениллĕ çулпуççем Ленинпа Сталин ертсе пынипе тĕнчери чи малта пыракан халăх, прогрессивлă этемлĕхĕн авангарчĕ пулса тăчĕ.

Мирлĕ условисенчи ĕçпе, хуçалăхпа культура тĕлĕшĕнчен çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе пирĕн халăх хамăрăн социализм çĕршывне тата çӳллерех пусăма çĕклĕ. Эпир вăрçă кӳрсе хăварнă сурансене юсанă вăхăтра, хамăрăн промышленноçа, хамăрăн колхозсене, хамăрăн нумай нацийĕ социализмлă аслă культурăна ырми-канми ĕçленипе малалла аталантарнă вăхăтра совет çыннин мораль тĕлĕшĕнчи вырăнĕ татах та ытларах палăрасси çинчен никĕн иккеленмелли те çук. Совет учрежденийĕсем тата вĕсенче ĕçлекен çынсем халăх интересĕсемшĕн, вăрçă геройĕсемшĕн, инвалидсемшĕн тата вĕсен семьисемпе ачи-пăчисемшĕн, ашшĕ-амăшĕшĕн, пирĕн чечекленекен çамрăксемшĕн, кашни çыннишĕн тăрăшнин примерне кăтартса парĕç.

(«Правда» хаçатăн июлĕн 30-мĕшĕнчи уçăмĕ).

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш АССР-ĕнчи колхозниксемпе колхозницăсене, ялхуçалăх, промышленность, культура тата искусство работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе награднăласси çинчен

Малалли. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммунин» 135, 138, 141, 142, 145 тата 146-мĕш номерĕнче.

ШУПАШКАР ХУЛИ ТĂРАХ:

30. Иван Гаврилович **Гаврилова** — Чăваш АССР Совнаркомĕн кадрсен пайĕн заведующине.

31. Василий Гордеевич **Гаркавцева** — профсоюзсен заводри комитечĕн председательне.

32. Ксения Петровна **Генрине** — ача çурчĕсемпе шкул çулне çитмен учрежденисенчи работниксен профсоюзĕн Чăваш АССР-чи Обкомĕн председательне.

33. Александр Иванович **Георгиевский** — Главснаблесăн лесоснабжени пайĕн начальникне.

34. Виталий Алексеевич **Гоменова**—713-мĕш çулйĕр эксплоатаци участокĕн главнăй инженерне.

35. Александр Степанович **Гордеева** — Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи ĕç вăйне шута илес тата валеçес тĕлĕшпе ĕçлекен бюро инспекторне.

36. Ольга Бруновна **Горна** — 1-мĕш ача садĕн завĕдующине.

37. Иван Иванович **Горохова** — Горький—Хусан çул управленийĕн диспетчерне.

38. Васса Григорьевна **Григорьевăна**—3058-мĕш номерлĕ эвакогоспитальри санитаркăна.

39. София Алексеевна **Григорьевăна**—ВКП(б) Обкомĕн протокол пайĕн заведующине.

40. Филипп Григорьевич **Григорьева** — ВКП(б) Обкомĕн кадрсен пайĕн инструкторне.

41. Михаил Георгиевич **Гринева** — Чăваш АССР Совнаркомĕн çар çыннисен çемьисене государство енчен пулăшу парас тĕлĕшпе ĕçлекен пайĕн заведующийĕн заместительне.

42. Таисия Михайловна **Грозинăна** — Чăвашсен государство академи театрĕн костюмершине.

43. Александр Иванович **Громова** — заводри гальваника цехĕн начальникне.

44. Михаил Михайлович **Груздева** — Атăл леш енчи торфопредприятинчи Сосновка участокĕн начальникне.

45. Алексей Алексеевич **Гусева** — Чăвашсен государство академи театрĕн актерне.

46. Ирина Ивановна **Данияванă** — Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн протоколпа контроль пайĕн заведующине.

47. Николай Максимович **Данилова** — Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн землеустройство управленийĕн начальникне.

48. Федор Федорович **Данилова** — Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн çĕр виçекен ревизорне.

49. Анна Васильевна **Дворкинăна** — Чăвашсен государство академи театрĕн актрисине.

50. Агафья Павловна **Денисовăна** — макарон фабрикинчи смена мастерне.

51. Павел Дмитриевич **Дмитриева** — Чăвашсен государство академи театрĕн актерне.

52. Виктор Николаевич **Дощатова** — заводри транспорт пайĕн начальникне.

53. Евдокия Архиповна **Дубовăяна** — ВКП(б) Обкомĕн шоферне.

54. Василий Георгиевич **Егорова** — Чăвашсен чĕлхе, литературăпа истори тĕлĕшпе ĕçлекен наукăпа тĕпчев институчĕн старши научнăй сотрудникне.

55. Елена Андреевна **Егоровăна** — 3058-мĕш номерлĕ эвакогоспитальри медицина сестрине.

56. Евдокия Тимофеевна **Егорова-Исаковăна**—республикăри библиотекăн отдел заведующине.

57. Иван Константинович **Загладăна**—заводри склад начальникне.

58. Петр Николаевич **Запольские** — республикăри хурт-хăмăр кантурĕн управляющине.

59. Алексей Захарович **Захарова** — Сыхăну наркомачĕн линипе техника участокĕн начальникне.

60. Семен Петрович **Земченкова** — заводри каменщике.

61. Михаил Григорьевич **Зубкова** — Чăвашсен государство академи театрĕн актерне.

62. Андрей Иванович **Иванова** — заводри ВКП(б) Обкомĕн парторгне.

63. Василий Тарасович **Иванова**—горвоенкоматăн запаспи старши лейтенантне.

64. Евдокия Ивановна **Ивановăна** — заводри прессовщицăна.

65. Зинаида Ивановна **Ивановăна** — заводри слесарь-сборщицăна.

66. Исаак Иванович **Иванова** — Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн главнăй зоотехникне.

67. Михаил Коронатович **Иконникова**—«Госсортфонд» кантурĕн управляющине.

68. Анатолий Александрович **Ионова**—Чăвашсен государство академи театрĕн актерне.

69. Николай Александрович **Каменщикова** — художник-педагога.

70. Зинаида Петровна **Капилевича** — 3058-мĕш номерлĕ эвакогоспитальри физиотерапи кабинечĕн заведующине.

71. Александр Семенович **Каплина** — завод начальникĕн ОРС енĕпе ĕçлекен заместительне.

72. Аркадий Михайлович **Каневские**—заводри инженера.

73. Мирон Иосифович **Каршеле** — заводри главнăй энергетика.

74. Семен Кириллович **Кириллова** — Шупашкар хулинчи прокурор помощникне.

75. Федор Иванович **Кирилова**—Чăваш АССР Вăрман Халăх Комиссариачĕн главнăй инженерне.

76. Алексей Владимирович **Клугина** — Госбанкăн Чăваш АССР-ĕнчи кантурĕн планпа экономика пайĕн старши инспекторне.

77. Анна Александровна **Кяюшникована** — Чăвашсен юрăпа ташă государство ансамблĕн солисткине.

78. Марк Германович **Кобленца** — заводри инженер-электрика.

79. Юрий Александрович **Козлова** — заводри токаре.

80. Нонна Ефимовна **Колесникована** — заводри гальваника.

81. Юлия Ивановна **Коптеркинăна** — заводри штамповщицăна.

82. Константин Павлович **Кошелева**—завод директорне.

83. Сергей Павлович **Красильникова**—Шупашкар хулинчи почта сыхăну пайĕн начальникне.

84. Варвара Михайловна **Красовскаяна** — СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Госпланăн Чăваш АССР-ĕнчи уполномоченнăйĕн Статистика Управленийĕн капитальнăй строительство секторĕн начальникне.

85. Георгий Федорович **Крупские** — тарасасем юсакан завод директорне.

86. Зинаида Николаевна **Куковăна** — заводри ача садĕн заведующине.

87. Петр Павлович **Кулагина**—ВКП(б) кула комитечĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарьне.

88. Анна Кирилловна **Купцовăна** — 3058-мĕш номерлĕ эвакогоспитальри санитаркăна.

89. Александр Иванович **Ланкова** — Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариачĕн государство тупăшĕсен пайĕн начальникне.

90. Екатерина Николаевна **Лаптевăна**—Госбанкăн Шупашкарти кантурĕн старши бухгалтерне.

91. Александра Михайловна **Латышевăна**—Чăваш АССР-ĕнчи Наркомхозăн чертежниксен бригадирне.

92. Валериан Алексеевич **Лебедева**—Чăваш АССР-ĕнчи пĕчĕк юханшывсене тĕпчесе вĕренес тата эксплоатацилес енĕпе ĕçлекен управленин начальникне.

93. Павел Лаврентьевич **Лебедева** — марксизм-ленинизм кафедрин заведующине, Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн доцентне.

94. Александр Иванович **Леонтьева** — заводри шофера.

95. Лазарь Моисеевич **Лукомника** — заводри инженер-электрика.

96. Иван Тихонович **Лупанова** — заводри слесаре.

97. Иван Григорьевич **Малгая** — поэта.

98. Степан Васильевич **Малиновские**—Чăваш АССР Совнарком председателĕн помощникне.

99. Нина Максимовна **Максимовăна**—ВКП(б) Обкомĕн шоферне.

100. Владимир Иванович **Михайлова**—заводри рабочие.

101. Данил Михайлович **Михайлова** — Чăваш АССР Вăрман Халăх Комиссариачĕн планпа экономика пайĕн начальникне.

102. Клавдия Дмитриевна **Мишинăна**—табак фабрикинчи бригадира.

103. Зинаида Михайловна **Мокеевăна**—Чăваш АССР Совнаркомĕн протокол пайĕн заведующине.

104. Галина Ивановна **Монетовăна** — 14-мĕш ача садĕнчи воспитательницăна.

105. Мубаракзян Мубаракшинович **Мубаракшина**—заводри вăрман касакана.

106. Екатерина Андреевна **Муравковăна**—Госбанкăн Чăваш АССР-ĕнчи кантурĕн хулари управленийĕн кассирне.

107. Михаил Григорьевич **Налимова**—Госбанкăн Чăваш АССР-ĕнчи кантурĕн кредит пайĕн начальникне.

108. Анастасия Кирилловна **Никитинăна**—заводри старши мастера.

109. Ефим Никитич **Никитина** — Чăвашсен государство академи театрĕн актерне.

110 Раиса Емельяновна **Никитинăна**—ВКП(б) Обкомĕн инструкторне.

111. Варвара Николаевна **Николаева-Жачевăна**—ВКП(б) Обкомĕн шкулсен пайĕн инструкторне.

112. Василий Яковлевич **Николаева**—Сыхăну наркомачĕн управлени начальникĕн заместительне.

Малалли пулать.

Педагогика институчĕсемпе училищисем çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче

РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ педагогика институчĕсемпе училищисене çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрлесси çинчен постановлени йышăннă. 1945—46-мĕш вĕренӳ çулĕнче 68.000 çын ытла нлме палăртса хунă: педагогика институчĕсене—15.000 çынна яхăн, учитель институчĕсене—14.000 ытла, педагогика училищисене—40.000 çынна яхăн илмелле.

Совнарком РСФСР Наркомпросне çав шкулсене пысăк квалификацилле преподавательсем 385 çын яма хушнă. Кунсăр пуçне, аякри институтсемпе училищисене çитес вĕренӳ çулĕнче лекцисем вулама столицăри тата ытти пысăк университетсемпе институтсенчи наука работникĕсене яма хатĕрленеççĕ.

Августăн 25-мĕшĕ тĕлне вĕренӳ сурчĕсене, общежитисене, лабораторисене, библиотекăсене, вĕренӳ тата хуçалăх оборудованине юсаса, хатĕрлесе çитермелле. Автономиллĕ республикăсен Совнаркомĕсене, облаççенчи, крайсенчи, тата республикăсене пăхăнса тăракан хуласенчи исполкомсене педагогика институчĕсемпе училищисенчи профессорсен, преподавательсен тата вĕренекенсен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатма хушнă, вĕсене хваттерсем пама хушнă тата ыттисем те.

РСФСР Наркомторгне педагогика тата учитель институчĕсем валли тетрадьсем, карандашсем тата ытти вĕренӳ хатĕрĕсем уйăрса пама хушнă. (ТАСС).

ШКУЛ ТУЛАШĔНЧИ АЧА-ПĂЧА УЧРЕЖДЕНИЙĔСЕН ĔÇĔ ÇИНЧЕН

РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ шкул тулашĕнчи ача-пăча учрежденийĕсен ĕçĕ çинчен постановлени йышăннă. Совнарком çакна паллă тунă: шкул тулашĕнчи ача-пăча учрежденийĕн ĕçĕ—ачасене шкулта илнĕ пĕлӳсене çирĕплетсе, тарăнлатса пыма пулăшасси, ачасен творчествăллă пултарулăхне вăйлатса пырасси, ачасене наукăпа ĕçе юратма вĕрентесси, ачасен культурăллă канăвне йĕркелесе пырасси пулса тăрать.

РСФСР Совнаркомĕ исполкомсене тата автономиллĕ республикăсен Совнаркомĕсене çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă тĕле шкул тулашĕнчи ача-пăча учрежденийĕсене пурне те юсаса хатĕрлесе çитерме хушнă, çав учрежденисене оборудовани, инвентарь, вĕренӳ пособийĕсем, материалсем парса пулăшмалла, вăхăтра вутă хатĕрлесе памалла.

Шкул тулашĕнчи ача-пăча учрежденийĕсен ĕçне учитĕльсене, инженерсене, агрономсене, наука, искусство, литература деятелĕсене, пысăк квалификацилле рабочисене явăçтармалла. РСФСР Наркомпросне шкул тулашĕнчи ача-пăча учреждени работникĕсен квалификацине ӳстерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ ĕçсем тума хушнă, çав работниксене, çĕнĕрен вĕрентсе, вĕсен квалификацине лайăхлатма пулăшмалла. Искусство ĕçĕсен управленине ача дворецĕсенче, пионер çурчĕсенче, ача паркĕсенче спектакльсем лартассине, концертсем парассине йĕркеleме хушнă.

1945 çул вĕçĕнче шкул тулашĕнчи ача-пăча учрежденийĕсен ĕçĕ тĕлĕшпе Пĕтĕм Российăри канашлăва туса ирттерме йышăннă. (ТАСС).

ИЗОБРАЗИТЕЛЬНАЙ ИСКУССТВО ĔÇНЕ АТАЛАНТАРАССИ

РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ изобразительнăй искусство работникĕсен кооператив юлташлăхĕн Пĕтĕм Российăри союзĕн—«Всекохудожникĕн» ĕçĕсем çинчен постановлени йышăннă.

Совнарком «Всекохудожникре» 1945 çулта чи лайăх пейзаж, илемлĕ портрет çырассишĕн тата скульптурăллă бюст тăвассишĕн ăмăрту ирттерме хушнă. Живопись, скульптура, графика тата прикладной искусствăн чи лайăх произведенийĕсене художниксенчен сутăн илсе выставкăсем ирттермешĕн союза фонд туса хатĕрлеме хушнă.

Кăçал тĕрлĕ облаççенчи художниксен виçĕ конференцийĕ пулса иртмелле: Уралпа Çĕпĕр художникĕсен (Новосибирскра), Атăл тăрăхĕнчи художниксен (Куйбышев хулинче) тата Вăтам облаçенчи художниксен (Мускав хулинче). Мускаври тата Ленинградри художниксемпе искусствоведсем лекцисем, докладсем, каласусем туса ирттерме тата художниксен ĕçĕсене пăхса тухма вырăнсене тухса çӳремелле.

Художниксен ĕçĕсене анлăн кăтартса тăма Мускавра ялан ĕçлекен выставка çумне ӳсĕмĕш рейс пулать. Икĕ кун маларах Мускавран Провидени бухтине «СССР Н-344» йышши вĕçекен кимĕ тухса кайнă. Ăна И. Черевичный пилот ертсе пырать. Ку самолет та полярниксене улăштарма çынсем—метереологсем, радистсем, синоптиксем тата лектор илсе кайнă. Черевичный юлташ пуçланă 9.000 километрлă рейс хыççăн Мускавпа Провидени бухти ӳшшинче яланлăхах сывлăшри çул уçăлать.

Июлĕн 22-мĕшĕнче Мускавран Тикси бухтине каякан Арктикăри пысăк çула паллă поляр летчикĕ В. Задков тухнă. Унпала пĕрле поляр авиацийĕн чи лайăх штурманĕсенчен пĕри В. Падолко штурман вĕçĕсе кайнă. Нордвикпа Тикси бухтинчи халăха çырусемпе литература парса хăварнă хыççăн, Задков юлташăн экипажĕ Арктикăн хĕвелтухăç секторĕнче кĕркуннечченех пулать. Унăн, пуринчен ытла, Лаптевсен тинĕсĕ таврашĕнче разведка ĕçĕсене тумалла пулать. Козловпа Черевичный юлташсен самолечĕсем сывăхри вăхăтрах столицăна таврăнаççĕ.

(ТАСС).

НИКИТСКИ БОТАНИЧЕСКИ САДĂН ГЕРБАРИЙĔ

Нимĕç захватчикĕсем Никитски ботанически садран Германие илсе тухса кайнă гербарие каялла тавăрнă. Гербари наука тĕлĕшпе питĕ паха япала пулса тăрать. Ăна 126 çул хушши пухнă, унта Крымпа Кавказăн флорине кăтартса паракан 43 пин тĕслĕх пур. (ТАСС).

Арктика таврашĕнчи пысăк вĕçевсем

Июлĕн 30-мĕшĕнче Химки шывĕ çинчен нумай вырăнлă «Каталина»—«СССР Н-341» йышши вĕçекен кимĕ, паллă поляр летчикĕ М. Козлов ертсе пынипе, сывлăша хăпарнă. Гидросамолет Архангельск хули çине çул тытнă. Унтан вăл Диксонпа Хатанга урлă Тикси бухтине каять.

Самолет çинче 15 пассажир, вĕсен хушшинче—поляр станцийĕсенче ĕçлекен çынсене улăштарма пыракан работниксем тата Главсевморпуть политуправленийĕн лекторĕ. Летчиксем поляр станцийĕсене тата Арктикăн хĕвеланăç секторĕнчи авиопортсене хаçатсем, журналсем тата çырусем илсе каяççĕ.

Ку ĕнтĕ Арктикăна кăçалхи çулла кайнă виççĕмĕш рейс пулать. Икĕ кун маларах Мускавран Провидени бухтине «СССР Н-344» йышши вĕçекен кимĕ тухса кайнă. Ăна И. Черевичный пилот ертсе пырать. Ку самолет та полярниксене гитлерла Германие çакăн пек тĕпшипех çĕнтермен те пулăттăмăр.

Англири тимĕр-тăмăрпа хурçă пăрахакан рабочисен профсоюзĕн генеральнăй секретарĕн заместителĕ Линкольн Эванс ТАСС корреспонденчĕпе калаçнă чухне çапла каласа панă:

«Магнитогорскри металлурги комбиначĕ чи чаплă предприятисенчен пĕри пулса тăрать. Комбинат цехĕсем уçă та çутă, рабочисен ĕç условийĕсем лайăх. Совет хĕрарăмĕсем çав тери лайăх ĕçлени питĕ тĕлĕнтерет. Шкулсемпе ача-пăча садĕсенче ачасене вĕрентсе воспитани парас ĕçе йĕркелени те пире çав тери тĕлĕнтерчĕ».

Англи делегацийĕн членĕсем вĕсен Магнитогорскра лайăх кĕтсе илнĕшĕн тав тунă. (ТАСС).

АНГЛИ ПРОФСОЮЗ ДЕЛЕГАЦИЙĔ МАГНИТОГОРЕЦСЕМ ПАТĔНЧЕ

Магнитогорска акăлчансен профсоюз представителĕсем пынă. Делегаци Магнит сăрчĕн рудникĕсене, металлурги комбиначĕн цехĕсене, шкулсене, ачасен тата культурăпа йăла учрежденийĕсене пăхса çӳренĕ.

Металлургсен дворецĕнче акăлчансен делегацийĕ комбинат рабочийĕсемпе тĕл пулнă.

— Манăн профсоюз,—тенĕ Магнитогорск рабочийĕсене делегаци членĕ Уильямс рабочи.—сирĕн пата килме май пуррипе усă курнă пĕрремĕш союз пулать Сирĕн çулпуççем мĕн тери малалла курса тăма пултарнине эпир туйрăмăр. Çак пысăк комбинат вĕсем шухăшланине çуралнă. Совет рабочийĕсем çав тери тăрăшса ĕçлемен пулсан тата Хĕрлĕ Çар çав тери вăйлă пулман пулсан, эпир

Республикăри колхозсенче

Лайăх ĕçлекен колхозра

ЕЛЧĔК. Питтĕпелĕнчи Пушкин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Ф. Васильев юлташ) тырпул пухса кĕме лайăх хатĕрленнĕ. Колхоз хирĕнче вăйлă тырă çитĕнет. Вăл тырра вăхăтра çумласа тасатнă, уйрăмах вăрлăх участокĕ çинчи тырă лайăх çитĕнет.

Колхоз тырпул пухса кĕртме çуракине вĕçленĕ хыççăнах хатĕрленме тытăннă. Колхозри виçĕ лобогрейкăна юсаса хунă. Алăпа вырма 80 çурла шăллатнă. Колхозра икĕ бригада анчах пулсан та 8-шар ридван хатĕрленĕ, вĕсенчен 10-ĕшне çĕнĕрен тунă. Халь татах çĕнĕрен 4 ридван тăвасçĕ. Колхозра пĕр молотилка пур, ăна та юсанă. Тырпул пухса кĕмелли ĕç планĕ тунă. Кăçал тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра пурĕ 174 çын ĕçлемелле. Планна 317 гектар çинчи кĕрхи тата çурхи тырпула 20 кун хушшинче вырса пухма палăртнă.

Колхозра 8 лавран транспорт бригади тунă. Транспорт бригадине ертсе пыма правлени членне А. Бакалов коммуниста çирĕплетнĕ. Колхозра кĕлте кӳме 8 вăкăра кӳлсе ĕçлеме вĕрентнĕ, халĕ татах 4 вăкăр вĕрентеççĕ. Колхоз çĕнĕ тырра йышăнма та лайăх хатĕрленет. Кĕлетсене пурне те дезинфекцилесе тасатнă.

Колхоз государство умĕнчи парăмсене те вăхăтра тӳлесе пырать. Какай парса татнă. 1946 çулпăн 3,31 центнер парса хунă, сӳс, тир, çăм парса татнă. Сĕт памалли плана 81 процент тултарнă.

Выльăх-чĕрлĕх хĕн каçарма та лайăх хатĕрленеççĕ. Выльăх ĕрчетмелли государство планне те ытлашшипех пурнăçланă. Выльăх-чĕрлĕх витисене хĕллене хатĕрлеме уйрăм бригада тунă. Выльăх-чĕрлĕх валли 20 тонна силос, 3 центнер вĕтĕрен тата 3 центнер армути хатĕрленĕ.

И. ПЕТРОВ.

Ĕçе пĕтĕмпех уйрăм сдельщинăпа тумалă палăртнă

ЧКАЛОВСКОЕ. «Красное Батырево» колхоз уйри тырпула пухса кĕртме хатĕрленсе çитрĕ. Колхозра пурĕ 3 жнейка, 14 урапа, 15 ридван юсаса лартнă. Транспорт инвентарĕ, ут таврашĕсем, михĕсем, вĕрен-пăявсем те çителĕклĕ. Тырă вырнă вăхăтра колхозниксем валли столовăй, ачасем валли ясли пулать. Тырпула пухса кĕртнĕ вăхăтра пур ĕçе те уйрăм сдельщинăпа тума палăртса хунă.

Уйра тырпул лайăх çитĕнет, ăна кантăрла та çĕрле те çирĕп хуралласçĕ.

Д. САВЕЛЬЕВ.

Çитменлĕхсене пĕтерес пулать

СĔНТĔРВĂРРИ. Астакассинчи «Большевик» колхоз члечĕсем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн «1945 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановление пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Çав постановление кашни колхозникпа колхозницăна тĕплĕн ăнлантарса панă.

Колхозниксем çаван хыççăн тырпул пухса кĕртме мĕнле хатĕрленсе çитнине тĕрĕслесе тухрĕç. 1 жнейка, 1 молотилка тата 1 сортировка юсавлă. Алăпа вырăнсем валли çурласем çителĕклĕ, вĕсене шăллаттарнă.

Колхоз утă çулса пĕтернĕ, государствăна утă парса татнă.

Анчах колхозра çитменлĕхсем те пурăха. Кунта витнĕ итемсене тасатса хатĕрлемен, çуртыррисене çулма кĕреплелле çавасем хатĕр мар. Колхоз тырпул пухса кĕртес ĕçĕн планне те туса хуман.

М. КАРПОВ,
Ял Совет секретарĕ.

Учительсемпе вĕренекенсем ялхуçалăх ĕçĕнче

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Кăçал вĕренӳ çулĕ пĕтсенех районри учительсемпе вĕренекенсем колхозсене ялхуçалăх ĕçĕсенче хастарлăн пулăшма тытăнчĕç. Вĕсем колхозсенче тырпула çумкурăкĕнчен тасатас тĕлĕшпе лайăх ĕçлерĕç, утă çулса пуçтарас тата силос хывас ĕçсене те хутшăнаççĕ. Тырпул пухса кĕртес ĕçе районĕпе 4148 вĕренекен, 183 учитель хутшăнать.

Колхоз уйхирĕсене çумкурăкĕнчен тасатса тăрас тĕлĕшпе Паньтăк вăтам шкулĕнчи вĕренекенсемпе учительсем палăрмаллах ĕçлерĕç. Учительсем вĕренекенсем хушшинче социализмлă ăмăртăва кунран кун анлăрах сарса пыма пулăшрĕç. Паньтăк шкулĕнче вĕренекен 112 шкул ачи тырпула çумкурăкĕнчен тасатас ĕçре 2151 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ. Вĕсем уйхире çумкурăкĕнчен тĕплĕн тасатса тăнă май, Молотов ячĕпе тăракан, «Заря», «Заветы Ленина» колхоз тырринсем халĕ парка çитĕнеççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлес ĕçре чылай учительсемпе вĕренекенсем тăрăниса ĕçлеççĕ. Вишенерти пуçламăш шкул учительници Е. Долгова юлташ утă çулнă çĕрте кулленхи нормăна 300—400-шер процент тултарса пычĕ. Вăл куллен 11—12-шер ĕçкунĕ илнĕ, хăйпе пĕрле ĕçлекен вĕренекенсене ĕçре хавхалантарса пынă. Михатайкинăпа Филиппова вĕренекенсем утă çулса кулленхи ĕç нормине 150-шар процент таран тултарса пычĕç.

Çĕнĕ Ирчемес ялĕнчи учительсемпе вĕренекенсем Чапаев ячĕпе тăракан колхозра выльăх-чĕрлĕх валли çителĕклĕ апат хатĕрлес енĕпе лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем 50 тонна силос хывнă, 5 лав çулçă апачĕ хатĕрленĕ, 2 центнер вĕлтĕренпе армути типĕтсе хунă.

Тырпула уйхиртен пухса кĕртес ĕçре мĕнле ĕçлесси çинчен учительсемпе вĕренекенсен пухăвĕнче ятарласах сӳтсе-явнă, конкретлăй решенисем йышăннă. Тырпул пухса кĕртес ĕçре учительсемпе вĕренекенсем звеносемне ĕçлессине йĕркеленĕ. Районĕпе учительсемпе вĕренекенсем пурĕ 508 звенора ĕçлеççĕ.

П. ТИХОНОВ.

Комсомолецсем вылăх апачĕ хатĕрлеççĕ

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Аслă Чемен ял Советĕпе кĕрекен «Парижская Коммуна» колхозра выльăх валли апат хатĕрлес ĕç ăнăçлă пырать. Ку ĕçре комсомолецсемпе çамрăксем—И. Шатунов, Б. Макаров, М. Егоров, В. Антонов, И. Тимайкин юлташсем тăрăниса ĕçлеççĕ, выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçе ытти колхозниксене ярăстараççĕ. Çамрăксем тăрăниса ĕçленине пула, колхоз 155 тонна силос хывнă, 20 центнер армути, 20 центнер вĕлтĕрен, 30 лав путек çапни, 15 центнер витаминлă утă хатĕрленĕ.

Н. СОФРОНОВ.

Государствăна утă параççĕ

ВĂРНАР. (Хамăр корр.). Районри малта пыракан колхозсем утă çулма тухнă хыççăнах хатĕрлев пунктне утă леçме тытăнчĕç. Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан, Анаткас Уравăшри Киров ячĕпе тăракан, Уравăшри «Майăн 1-мĕшĕ», Хапăсри «Советская деревня», Утарти «Трактор», Сурнарти «Красная Чувашия» колхозсем 1945 çулта государствăна утă памалли хăйсен обязательствисене пурнăçларĕç.

Анчах та, государствăна утă парас ĕç районра начар пырать-ха. Паянхи куна пурĕ те 32,5 процент çеç панă. Чылай колхозсем хатĕрлев пунктне пĕр центнер та утă леçмен.

Кунта государствăна утă парас ĕçе хăвăртлатмалла. Юлса пыракан колхозсен ку тĕлĕшпе малта пыракан колхозсенчен пример илмелле.

Е. ВОЛКОВ.

* * *

ЕЛЧĔК. Хăвăл Çырмари «Новая волна» колхоз 72 гектар çинчен утă çулса пĕтерчĕ те лайăх типĕтсе капана хыврĕ. Халĕ государствăна утă парасçĕ. Кавалти «Комбайн» колхоз та утта вăхăтра çулса капана хыврĕ. Колхоз государствăна 54 центнер утă парса татрĕ.

А. ЧЕРНОВ.

Берлин хулинчен тăван ялне таврăнчĕç

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Телефонпа). Çак кунсенче Çăпăçури Çартан 7 фронтовик хăйсен килне таврăнчĕç. Трак разъездне вĕсене кĕтсе илме тăванĕсем тата колхозниксем нумайăн пухăннă. «Победа» колхоз председателĕ Елена Трошкина вĕсене кĕтсе илме колхозăн чаплă ăйăрĕпе пынă.

Вăрçăччен Петр Малинин, Степан Борисов тата Василий Марков юлташсем «Победа» колхозра ответлă ĕçсенче ĕçленĕ. Халĕ çак паттăр воинсем, немĕç захватчикĕсене çапса аркатнă хыççăн, Берлин хулинчен тăван ялне таврăнчĕç.

Яла çитсен те вĕсене колхозниксем савăнăçлăн кĕтсе илчĕç.

— Тăван ял-йышсем!—терĕ Малинин юлташ хăйсене кĕтсе илме пухăннă колхозниксене.—Эскер вăрçă вăхăтĕнче ырми-канми ĕçлесе фронта пулăшса тăни немĕç фашизмне тĕпĕ-йĕрĕпех çапса аркатма пулăшрĕ. Хĕрлĕ Çар фронтра мухтавлăн çапăçса хамăран Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварчĕ. Сталин юлташ генилле ертсе пынине эпир историллĕ çĕнтерӳ турăмăр.

Паттăр воинсене кĕтсе илме пухăннă колхозниксем те саламлă сăмахсем тухса каларĕç.

— Фронтран килекен юлташсем пирĕн колхозăн тĕрекле çирĕплетме пулăшаканскем пулса тăраççĕ,—тет колхоз председателĕ Трошкина.

Колхоз воинсене кашнинех 5-шер пăт тырă панă. Вăрçăччен ял Совет председателĕ пулса ĕçленĕ Малинин юлташа хăйĕн килти хуçалăхне аталантарма пăру тата сысна çури парса пулăшрĕ.

Фронтовиксем хăйсене ăшшăн кĕтсе илнĕшĕн колхозниксене пĕтĕм чĕререн тав тăваççĕ.

С. ШАДИН.

Парти пурнăçĕ

Парти организацийĕсен комсомола ертсе пырас ĕçе вăйлатмалла

СĔНТĔР. Юлашки вăхăтра районри парти организацийĕсем комсомол организацийĕсене ертсе пырас ĕçе чылай лайăхлатрĕç. Çавна пула комсомолăн пуçламăш организацийĕсем хăйсен ĕçне кулленех вăйлатса пыраççĕ, комсомол ретне çĕнĕрен членсем илесси те чылай ӳсрĕ. Юлашки виçĕ уйăх хушшинче комсомол ретне 144 çамрăка илнĕ.

Чылай çĕрте комсомолецсемпе союзра тăван çамрăксем колхоз производствинче хастарлăн ĕçлеççĕ. Çуракинче 498 комсомолец ĕçленĕ, вăл шутран 285 комсомолец сухаçăсем пулнă. Çуракине ирттернĕ çĕрте «Çĕнĕ çул», «Колос», «1905 çулхи революци» тата «Çĕнĕ Юнта» колхозсенчи комсомолецсемпе союзра тăван çамрăксем уйрăмах тăрăниса ĕçлерĕç.

Промысла кооперацийĕн артелĕсенче те кăтартуллă ĕçлекен комсомолецсем сахал мар. Сăмахран, Янăмри «Дружба» артельти комсомолецсемпе союзра тăван çамрăксен Цветкова юлташ ертсе пыракан бригади, кăçал республикăра икĕ хутчен малти вырăна тухса, премисем илчĕ.

Партин хăшпĕр организацийĕсем, çавăн пекех уйрăм коммунистсем те комсомолăн вырăнти организацийĕсене кулленех тивĕçлĕ пулăшу парса пыраççĕ. Акă районри НКВД отделенийĕнчи Кудряшов, Ведин тата Салтушкин коммунистсем, комсомолецсен пухăвĕсенче тăтăшах пулса, вĕсене ĕçре пулăшаççĕ. Çавăн пекех «Колос» колхозри Тямин, «Хĕрлĕ Паттăр» колхозри Лебедев коммунистсем те комсомолецсене тăтăшах пулăшса тăраççĕ.

Анчах Мăн Хураçка ял Советĕнчи партин территориллĕ пуçламăш организацийĕн секретарĕ М. Копламарова тата Ахманейри партин территориллĕ пуçламăш организацийĕн секретарĕ Васильева юлташсем комсомол организацийĕсене вуçех те пулăшмаççĕ. Çавна пула ĕнтĕ кунта комсомолецсен пухăвĕсем 3—4 уйăхран тин пулкалаççĕ.

Калас пулать, районри пур колхозсенче те комсомолăн пуçламăш организацийĕсене халĕ туса çитреймен-ха. Мăн Хураçка ял Совене 7 колхоз кĕрет, анчах «Пахарь» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсенче кăна комсомолăн пуçламăш организацийĕсем пур. Вăл организацисенче те 3—4 комсомолец кăна шутланаççĕ.

Комсомолецсене парти ретне илесси районра вăрахăн пулса пырать. Парти ретне илме 5 уйăх хушшинче 15 комсомолеца кăна рекомендаци панă. Вăл шутран колхозниксем 2 çын кăна.

Комсомолăн хăшпĕр пуçламăш организацийĕсем ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XIII-мĕш пленумĕ йышăннă решенисене ячĕпĕн кăна сӳтсе-явнă. Акă комсомолăн Пушкăртри çичĕ çул вĕренмелли шкулти пуçламăш организацийĕнче XIII-мĕш пленум решенийĕсене сӳтсе-явнă хыççăн «ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XIII-мĕш пленумĕн решенийĕсене шута илес» тенĕ. Пухура партин территориллĕ пуçламăш организацийĕн секретарĕ Михайлов юлташ пулнă. Анчах вăл çав планăпа çийĕнчех тӳрлетме пуланăман. Паллах, кун пек решени йышăнса тăварни комсомолецсене немĕнле ĕçе те мобилизанилемен.

Районĕпе партин пуçламăш организацийĕсем 28 тата кандидатсем 4 группи шутланать. Анчах комсомол организацийĕсен ĕçĕсем çинчен пурĕ те партин 6 пуçламăш организацийĕн пухăвĕсенче кăна сӳтсе-явнă.

Паянхи куна районри 26 колхозра комсомолăн пуçламăш организацийĕсем çук, кунсăр пуçне ик-виç уйăх хушшинче икĕ комсомол организацийĕ саланса кайнă.

ВЛКСМ райкомĕн ĕçĕнче те çитменлĕхсем пур-ха. ВЛКСМ райкомĕн учет секторĕн заведующийĕ Пафмутьева юлташ учет ĕçне япăхтарса янă. Вăл районри комсомол организацийĕсем член укçине мĕнле пухса пынине те тĕрĕслемест.

Парти организацийĕсен комсомола ертсе пырас ĕçе вăйлатмалла.

М. ИСАЕВ.

КОЛХОЗРИ ХОР КРУЖОКĔ

Темиçе уйăх каярах Уйкас-Турайри «Металлист» колхозра (Советски район) хор кружокĕ организациленĕ. Хора колхозри вăрлăх хуçалăхĕн заведующийĕ, 65 çулти колхозник Павел Трофимов ертсе пырать. Кружокра пурĕ 26 çын тăрать. Кружок занятийĕсене çамрăксемпе пĕрлех ватă колхозниксем те çӳреççĕ.

Хорăн репертуарĕнче Чăваш халăх юррисем нумай. Хор колхозра тата кӳршĕри ялсенче темиçе хутчен те хăйĕн пултарулăхне кăтартса панă. Юрăсене баян нумай илемлетет. Колхозниксем хористсене пур çĕрте те кăмăллăн кĕтсе илеççĕ.

Чăваш республики 25 çул тултарнă юбилей ячĕпе хор кружокĕ район центрĕнче юрăсем юрласа тата хор руководителĕ Трофимов юлташ çырнă монтажа лартса пачĕ. Чăваш халăхĕн ĕлĕкхипе хальхи пурнăçне кăтартакан фольклор материалĕсемпе туллин усă курса çырнă монтажа кураканскем кăмăлларĕç.

Халĕ хор кружокĕ колхозниксене тырпул пухса кĕнĕ вăхăтра хирĕ тухса концертсем пама çĕнĕ юрăсемпе гашăсем вĕренет.

Яков СИГАЙ.



Будапешт хулинче ăна ирĕке кăлараççĕ. Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе офицерĕсене чысласа памятник лартнă.

Л. ДОРЕНСКИЙ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Совет профсоюзĕсен делегацийĕ США-ра пулни

ЧИКАГО, июлĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Июлĕн 27-мĕшĕнче совет профсоюзĕсен делегацийĕ Чикаго хулинчи Свифт компанийĕ аллинче тăракан чи пысăк аш-какай комбинатĕнче пулнă. Совет хăнисем ячĕпе туса ирттернĕ ирхи апатланура производствăллă профсоюзсен (КПП) конгресс центрĕсен, Чикаго хулипе Иллинойс штатĕн руководителĕсем, çавăн пекех профсоюзсен вырăнти организацийĕсен руководителĕсем пулнă.

КПП составне кĕрекен Чикаго профсоюзĕсен ячĕпе хăнасене саламласа, Иллинойс штатĕнчи КПП центрĕн представителĕ Лаунсенд Совет Союзĕпе Америка профсоюзĕсем хушшинче сыхăну тытма кирлине палăртса лăварнă.

Саламлă сăмах çине ответлесе, Кузнецов юлташ çакна палăртнă: Совет профсоюзĕсен делегацине Пĕрлешӳллĕ Штатсене килсе курма чĕнни пит паллă факт пулса тăрать. Пĕрлешӳллĕ Штатсене çитнĕ совет делегацийĕ хăйсен тусĕсем хушшинче пулнине туйса илчĕ. Çакăн пек туслă сыхăнусем питĕ паха та питĕ кирлĕ. Совет Союзĕн профсоюзĕсен делегацийĕ кунта килни Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи рабочи движенине сыхăну лайăхлатма пулăшĕ. Совет профсоюзĕсен делегацийĕ, тенĕ малалла Кузнецов юлташ, пĕтĕм тĕнчери рабочисен пĕрлĕхĕшĕн кутарана çити КПП тата, пуринчен ытла, унăн руководителĕ Мэррей тунă ĕçсемшĕн тав тăвать. Юлашкинчен Кузнецов юлташ Америка профсоюзĕсен руководителĕсене Совет Союзне пыма чĕннĕ.

Ирхи апатланура çавăн пекех тата «Франци христиан ĕççыннийĕсен федерацийĕн» секретарĕ Жан Бродье пулнă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл Чикаго хулинчи КПП представителĕсене тата совет профсоюзĕсен делегацине саламланă, çавăн пекех хăй пĕтĕм тĕнчери профсоюз организацийĕ майлă пулни çинчен каланă.

Свифт комбинатне пăхса тухнă хыççăн, çĕвĕ çĕлекенсен профсоюзĕн вырăнти центрĕнче апатлану пулса иртнĕ. Апатланура Кузнецов юлташ тата Иллинойс штатĕнчи КПП представителĕ Левин пĕр-пĕрине саламласа кĕске сăмахсем каланă. Хăйĕн сăмахĕнче Левин гитлеризма аркатса тăкнă Хĕрлĕ Çарăн паттăрлăхне палăртнă. Совет профсоюзĕсен делегацийĕн членĕ Орлова юлташ Совет Союзĕнчи çĕвĕçсем вăрçă вăхăтĕнче паттăрла ĕçлени çинчен каласа панă. Юлашкинчен Кузнецов юлташ Совет делегацине лайăх йышăнăшăн тав тунă.

«ВАПАА САНА» ХАÇАТ ХОРНБОРГ ĔÇНЕ КРИТИКЛЕТ

ХЕЛЬСИНКИ, июлĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Июлĕн 27-мĕшĕнче 28-мĕшĕнче «Вапаа Сана» хаçатра статья пичетлесе кăларнă. Çав статьяра Финляндин тулашри политикине тĕрĕслеме уйăрнă комитетăн председательне Хорнборг профессора критикленĕ. Хаçат çакна асăрхаттарать: Хорнборг «Катынра пулса иртнĕ ĕç» пирки Геббельс пропаганди хыççăн кайнă. Кунсăр пуçне, вилĕм лагерĕсенче нацистсем тунă палăк. тискерлĕхсене сивлеме унăн вăхăт та, пурлăх та пулман. Çавăн пекех, ученăй пулса, Хорнборг «аслă Финляндин тулашри политикине пăхса тухма уйăрнă комитетăн председательне çавăн пек сынăлартнинчен тĕлĕнмелле, тесе çырать хаçат. Çавăнпа та «Вапаа Сана» хаçат—Хорнборг хальхи вăхăтра та вăрçăшăн айăпла сынсене хӳтĕлес ĕçе туса пымасть-ши—текен ыйтăва лартма кирлĕ тесе шутлать.

КОНСУЛЬТАЦИ АССАМБЛЕЙИ КОНСТИТУЦИ ЫЙТĂВĔ ТĂРĂХ ПРАВИТЕЛЬСТВО ХАТĔРЛЕНЕ ЗАКОН ПРОЕКЧĔПЕ КИЛĔШМЕН

ПАРИÇ, июлĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 29-мĕшĕнче ассамблейăра конституци ыйтăвĕ тăрăх правительство тăратнă закон проектне сӳтсе-явасси пĕтнĕ. Пренире тухса калакансем нумай пулнă. Де Голль генерал та тухса каланă. Вăл çав ыйту пирки правительство мĕнле шухăшланине каласа панă. Вара ассамблея сасăлама тытăннă. Правительство сĕнĕ закон проекчĕшĕн мĕн пурĕ те 19 сасă кăна пухăннă, хирĕç 120 сасă пулнă. Çапла ĕнтĕ консультаци ассамблейи консультаци ыйтăвĕ тăрăх правительство хатĕрленĕ закон проектне йышăнман.

АНГЛИ ПАРЛАМЕНЧĔН СЕССИЙĔ УÇАЛАС УМĔН

ЛОНДОН, июлĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Парламент ларăвне уçассине августăн 8-мĕшĕнчен августăн 15-мĕшне куçарни çинчен пĕлтерни сумне хушса. Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: общинăсен çĕнĕ палати августăн 1-мĕшĕнчех пухăнать, вăл спикера (председателе) суйламалла. Тепĕр икĕ кун хушшинче палатăн çĕнĕ членĕсем присяга памалла.

ГРЕЦИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВЫРĂНТАН ТУХНИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНĔ ПИРКИ

ЛОНДОН, июлĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Афины хулинчен çапла пĕлтерет: Вухгарис кабинечĕ Греци регентне вырăнтан тухасси çинчен ыйту панине хаçатсенче пичетлесе кăларни пирки ответлесе, информаци министрĕ Закинфинос официальнăй йĕркепе çапла каланă: ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Софианопулос представительсен çĕнĕ правительствине туса хума сĕннĕ̆чĕ тенĕ. Вулгарис, Дамаскинос регент патне кайнă та, вăл хăй тата унăн кабинетĕнче тăракан членсем хăйсен ĕçĕсене халĕ те туса пыраççĕ тесе асăрхаттарнă. Регент халăх интересĕсем çĕнĕ правительство туса хума хушаççĕ тесе шутлать пулсан, вĕсем вырăнтан тухма хатĕр, тенĕ Закинфинос.

ЗАХАРИ АДИС ПРЕДСТАВИТЕЛЬСЕН ПРАВИТЕЛЬСТВИ ТУМА ЫЙТАТЬ

АФИНЫ, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). «Ризоспастис» хаçат компарти лидерĕ Захариадис сырнă умстатьяна пичетлесе кăларнă. Статьяра халех представительсен правительствине туса хума ыйтнă. «Хальхи правительство,—тенĕ статьяра,—панкрута тухрĕ. Вăл çар союзĕн тата монархистсемпе фашистсен шайккин аллинчи пукане кăна пулса тăрать. Греци ытти çĕршывсем умĕнче пĕр пĕччен тăрса юлчĕ, çав пĕчченлĕх кашни кунах ӳссе пырать. Çакă вăл Кафандарис тата Софианопулос каланисенче те паллă пулчĕ. Вĕсем иккĕш те правительствăна халех уланăтарма кирлине палăртрĕç. Пĕтĕм тĕнчери обществăллă шухăш та пирĕн умма çакăн пек ыйту кăларса тăратать. Ялтăра йышăннă решенисем те çавнах хушаççĕ».

Захариадис регент позицине те хытă критиклет. Регент реакци майла ĕçлет, тивĕçлĕ улшăнусене тума чăрмантарать. Автор малалла монархистсен «халăх партине»—«сутăнчăксен партине» тăрă шыв çине кăларать. Çавăн пекех вăл либералсен лидерне Софулиса критиклет, «вăл тăвакан маневрсемпе иккĕленчĕке пула Вулгарис влаçа тытса тăма пултаратьха», тет.

Юлашкинчен Захариадис—паян представительсен правительствине тума тăрăшакансене компарти пулăшса тăма пулать, тесе палăртнă. Çав правительство çĕршывра йĕркелĕх тата лăпкăлăх туса хумалла, монархистсене çăварлăхламалла, тăшмана хирĕç тăрас ухăмăн прависене тавăрса памалла, политика ĕçĕсемшĕн тунă çынсене амнисти памалла тата учредительнăй пухăва ирĕклĕн суйласа ирттермелле.

ЧЕХОСЛОВАКИРЕ КОНФИСКАЦИЛЕНĔ ÇĔРСЕМ ÇИНЕ ВЫРНАÇТАРАССИ ÇИНЧЕН КАЛАКАН ДЕКРЕТ

ПРАГА, июлĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословаки республикин президенчĕ Э. Бенеш немĕçсен тата государствăн ытти тăшманĕсен çĕрĕсем çине çĕрĕçĕпе пурăнакан чех, словак тата ытти славян çыннисене вырнаçтарасси çинчен калакан декрета алă пуснă. Çавăн пек çĕре илме халăх ирĕклĕхĕшĕн пынă кĕрешӳре палăрнă çынсем чи малтан тивĕçлĕ пулаççĕ. Вĕсен шутне çаксем кĕреççĕ: политика енĕпе айăпласа хупнă çынсемпе вĕсен семьинчи çынсем тата вăрçă вăхăтĕнче сион курнă çĕре ĕçлесе пурăнакан çынсем. Уйăрса панă çĕр лаптăкĕшĕн укçа илмелле. Укçине çĕрĕ епле пулнине кура тата çĕр ыйтаканĕн семьи мĕнле пулнине кура илеççĕ.

Кенигсбергри король замокĕнче тупнă япаласем

КЕНИГСБЕРГ, июлĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Кенигсберг варринче король замокĕ ларать. Пруссаксен çак йăвине кĕрсе ларнă немĕçсем раснах хыта хирĕç тăнă, анчах совет гвардеенĕсем хĕснине тытса чарма пултарайман

Халĕ замок ишĕлчĕкĕсене чавса кăлараççĕ. Ку ĕçе совет ученăйĕсем ертсе пыраççĕ. Вĕсем гитлеровецсем пирĕн çĕршыври музейсемпе заповедниксенчен вăрласа илсе килсе кунта пытарнă культурăллă тата историллĕ паха япаласене тăван çĕршыва тавăрса парас тесе тăрăшаççĕ.

Истори наукисен докторĕ А. Я. Брюсов ТАСС корреспондентне çапла каласа панă:

— Пĕр метр хулăмĕш тĕрлĕ ишĕлчĕк айĕнче эпир «Царское селоран янтарь йышăннине» çырса пынин кĕнекине тупрăмăр. Кенигсбергри искусство музейĕн директорĕ кунстмайстер Альфред Роде каланă тăрăх, Детское селори Екатерининскы дворецăн янтарь пӳлĕмне Кюхлер генерал-фельдмаршал çаратнă. Çавăн пекех вăл Детское селора вăрланă ытларинланă сĕтел-пукансене те Кенигсберга ăсатнă. Çав сĕтел-пукансене замок ишĕлчĕкĕсем айĕнче тупнă. Янтарь пӳлĕмне илемлетнĕ япаласене халĕ тупайман-ха.

Замок ишĕлчĕкĕсене чавнă чухне нимĕçсем Киевран, Минскран, Харьковран, Днепропетровскран, Пушкинăран вăрласа илсе тухнă паха япаласене тупнă. Окупантсем Гатчинăран çаратса тухнă 35 ылтăнланă рамăна тупнă. Замокăн кăнтăр енчи пайĕнче Харьковран, Ковельрен вăрласа тухнă авалхи чиркӳсен (XV-мĕш, XVI-мĕш, XVII-мĕш тата XVIII-мĕш ĕмĕрĕсенчи) живописсене, Шишкинăн «Хыр вăрманĕ» ятлă картинки оригиналне, йăсран шăратса тунă пĕчĕк шкапа, Гатчинăран илсе килнĕ перламутртан тунă орнамента тата ытти тĕрлĕ паха япаласене—пĕтĕмпе 2.500 япалана ăсăн тупнă.

ЛАПКА ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇА

ЛОНДОН, июлĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви панă хыпарсем тăрăх, союзниксен Лапка океанăн кăнтăр хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăталла вăйăсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ июлĕн 30-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: июлĕн 27-мĕшĕнче 28-мĕшĕнче Америка бомбардировщикĕсемпе истребителĕсем 700 вĕçев ытла тунă. Вĕсем Япони çĕрĕнчи объектсем çине, вăл шутра Кюсю утравĕ çинчи Кагосима хулинчи чугун çул центрĕ çине бомбăсем пăрахнă.

Ытти самолетсем Корейăна, Формоза утравне тата Борнео утравĕ патĕнче тĕрăкан суднăсене тапăннă. Японин 18 карапĕпе грузовой суднине пыва путарнă.

ВАШИНГТОН, июлĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Лапка океан çинчи флочĕн штабĕ çапла пĕлтерет: июлĕн 30-мĕшĕнче авианоседсем çинчен вĕçсе улăхнă Англипе Америка самолечĕсем Токио районĕнчи аэродромсене тата ытти вăрçă объекчĕсене тапăннă. Америкăн 3-мĕш флочĕпе Англин оперативлă эскадрилчи линкорсем, крейсерсем тата эсминецсем Хонсю утравĕн кăнтăр çыранĕнчи Хамамацу хулине пенĕ.

Ответлă редактор
заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

Чăвашсен ялхуçалăх институчĕ агрономпе зоотехника факультечĕсен 1-мĕш курсне вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Институт районри, облаçри тата республикăри çĕрĕç органĕсенче, çавăн пекех тата опыт станцийĕсенче, наукăпа тĕнчев институчĕсенче ĕçлеме пысăк квалификацияллĕ агрономсемпе зоотехниксем вĕрентсе хатĕрлет.

Институтра 4 çул вĕренмелле.

Института 17 çултан пуçласа 35 çула çитнĕ çынсене, вăтам шкултан вĕренсе тухнисене, çак предметсемпе экзамен лайăх панисене илеççĕ: вырăс чĕлхипе тата литературăпа (сăмахпа каласа тата çырса), физикăпа тата химипе. 1944 çулта вăтам шкултан отличник аттестачĕпе вĕренсе тухнисене тата 1945 çулта вăтам шкултан вĕренсе тухнă чух ылтăн тата кĕмĕл медаль илнисене института экзаменсĕрех илеççĕ.

Ялхуçалăх техникумĕсемпе зоотехника техникумĕсенчен пур предметсемпе те отличнă вĕренсе тухнисене те экзаменсăрах илеççĕ.

Заявленисене институт директорĕ ячĕпе çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, ул. Волгостроя, 4 Сельхозинститут.

Заявлениепе пĕрле çак документсене ямалла: 1) автобиографи, 2) ăста мисĕ çул вĕреннине кăтартакан свидетельство (свидетельствăна хăйпе, копипе мар), 3) виçĕ сăн ӳкерчĕкĕ, 4) Хĕрлĕ Çар тĕлĕшпе мĕнле шутра тăнине кăтартакан справка (ăна çара каймаллисен ямалла).

Заявленисене сентябрĕн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Института вĕренме илмелли экзаменсем сентябрĕн 1-мĕшĕпе 20-мĕшĕ хушшинче пулса иртеççĕ.

Институтра октябрĕн 1-мĕшĕнче вĕрентме пуçлаççĕ.

Дирекци.

Чăвашпромкассăна яланлăха ĕçлеме бухгалтерсем, шут работникĕсем, çар сыннисен семьисем тĕлĕшпе ĕçлекен инспектор тата доверенăй врач кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Калинина, 51.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, рабселькорсен пайĕн — 0—67, издательство конторин — 0—23.

НТ 00185 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2, ф. б. 59 42 п. п. Тираж 16.000